ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН УЙРĂМ САККУНĔСЕН АКЧĔСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Раççей Федерацийĕн налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" 2001 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 38 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2001, 42, 45 №-сем; 2002, 46, 49, 52 №-сем; 2003, 54, 57 №-сем; 2004, 59, 61 №-сем; 2005, 64, 65 №-сем; 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 87 №; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 96 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 10 №-сем; 2014, 9, 11 №-сем; 2015, 6, 10 №-сем; 2016, 6, 11 №-сем; 2017, 11 №; "Республика" хаçат, 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 7-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2022, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2024, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 13 статьяра:

а) 1-мĕш пунктăн иккĕмĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 64 статйин 10-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн отсрочка е рассрочка парасси çинчен тунă йышăну вăя кĕрес

пулсан отсрочкăна е рассрочкăна паракан вăхăта çакăн пек шутласа палăртаççĕ:";

ă) 3-мĕш пунктăн тăваттăмĕш абзацне "отсрочка е рассрочка вăйра тăракан" сăмахсем умĕн "отсрочка е рассрочка парасси çинчен калакан йышăну вăя кĕнĕ кунран пуçласа" сăмахсем хушса хурас;

2) 23 статьяра:

а) 1.3-мĕш пунктра "2024 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕчченхи" сăмахсене "2027 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕчченхи, анчах тĕп хатĕрсен объекчĕсене регистрациленĕ кунран пуçласа виçĕ çултан ытла мар" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 1.4-мĕш пунктра "2023–2026 çулсенче" сăмахсене "2023 çултан пуçласа" сăмахсемпе улăштарас;

б) çакăн пек çырса 1.8-мĕш пункт хушса хурас:

"1.8. Чăваш Республикин "Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферине çĕнетесси тата аталантарасси" патшалăх программин Чăваш Республикин территорийĕнче шывпа тивĕçтермелли тата шыва юхтарса кăлармалли мероприятийĕсене пурнăçланă шайра туса хунă, 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ хыççăн палăртнă йĕркепе регистрациленĕ, бухгалтери учетне туса пыма тĕп хатĕрсен объекчĕсем пек палăртнă йĕркепе учета тăратнă Чăваш Республикин муниципаллă округĕсен территорийĕнче вырнаçнă шывпа тивĕçтерекен тата шыва юхтарса кăларакан объектсем тĕлĕшпе организацисен пурлăхĕнчен илекен налук енĕпе паракан çăмăллăх ставкине 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 2027 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕчченхи тапхăр валли 0,1 процент чухлĕ палăртаççĕ.";

3) 33 статьяра:

а) виççĕмĕш абзацра ", тата транспорт хатĕрĕсене хăйсен уставĕсенче кăтартнă ĕç-хĕле пурнăçлама усă куракан, вĕсен устав капиталĕ инвалидсен пĕрлешĕвĕсен укçи-тенкинчен пухăнакан общество пĕрлешĕвĕсене (организацийĕсене), хуçалăх юлташлăхĕсене тата обществисене" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) çакăн пек çырса тăваттăмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"çак статьян виççĕмĕш абзацĕнче кăтартнă çынсен общество пĕрлешĕвĕсене (организацийĕсене), транспорт хатĕрĕсене хăйсен уставĕсенче кăтартнă ĕç-хĕле пурнăçлама усă куракан хуçалăх юлташлăхĕсене тата обществисене (вĕсен устав капиталĕ инвалидсен общество пĕрлешĕвĕсен укçи-тенкинчен пухăнать);";

б) тăваттăмĕш абзаца пиллĕкмĕш абзац тесе шутлас тата ăна çакăн пек çырса хурас:

"оборонăн спорт-техника организацийĕсене (обществисене);";

в) çакăн пек çырса улттăмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"потребительсен кооперацийĕн организацийĕсене;";

г) пиллĕкмĕш абзаца çиччĕмĕш абзац тесе шутлас тата унти "18 çула çитичченхи ӳсĕмри виçĕ е ытларах ачаллă" сăмахсене "18 çула çитичченхи ӳсĕмри виçĕ е ытларах ачаллă нумай ачаллă çемьери аслă ача 18 çула çитиччен е вăл вĕренӳ ĕç-хĕлне пурнăçлакан организацире куçăн майпа вĕренет пулсан 23 çула çитиччен" сăмахсемпе улăштарас;

д) улттăмĕш абзаца саккăрмĕш абзац тесе шутлас;

е) çиччĕмĕш абзаца тăххăрмĕш абзац тесе шутлас тата унта "полицин ятарлă çар званийĕллĕ çынсене" сăмахсем хыççăн "федераци патшалăх органĕсен Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă территори органĕсен ĕçченĕсене" сăмахсем хушса хурас;

ĕ) саккăрмĕш абзаца вуннăмĕш абзац тесе шутлас тата ăна çакăн пек çырса хурас:

"Çак статьян тăххăрмĕш абзацĕпе пăхса хăварнă налук çăмăллăхне физически сăпатсене, социаллă хӳтлĕх енĕпе патшалăх политикине пурнăçлакан Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ тăратакан сведенисене тĕпе хурса, налук тапхăрĕ хыççăнхи уйăхăн 31-мĕш числинчен кая юлмасăр кашни çулах параççĕ.";

ж) тăххăрмĕш – вун иккĕмĕш абзацсене тивĕçлĕн вун пĕрмĕш – вун тăваттăмĕш абзацсем тесе шутлас;

4) 39 статьяра:

а) 2-мĕш пунктăн таблицинче

1	2	3
"48.	Сĕтел-пукан тăвасси	334"

позицие

1	2	3
"48.	Çынсем уйрăм заказ панипе кухня сĕтел-пуканĕ тăвасси; ытти ушкăнсене кĕртмен ытти сĕтел-пукана тата сĕтел-пуканăн уйрăм деталĕсене çынсем уйрăм заказ панипе тăвасси	334"

позиципе улăштарас;

ă) 2.9-мĕш пунктра:

тăваттăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"виççĕмĕш ушкăн – дифференциацин 0,7 коэффициенчĕллĕ Улатăр муниципаллă округĕ, Патăрьел муниципаллă округĕ, Канаш муниципаллă округĕ, Шупашкар муниципаллă округĕ, Çĕмĕрле муниципаллă округĕ;";

улттăмĕш абзаца çакăн пек çырса хурас:

"пиллĕкмĕш ушкăн – дифференциацин 0,5 коэффициенчĕллĕ Элĕк муниципаллă округĕ, Красноармейски муниципаллă округĕ, Хĕрлĕ Чутай муниципаллă округĕ, Пăрачкав муниципаллă округĕ, Шăмăршă муниципаллă округĕ, Тăвай муниципаллă округĕ.";

б) 4-мĕш пунктра:

таблицăра

1	2	3	4
"7.	Сĕтел-пукан тăвасси	Ытти сĕтел-пукан туса хатĕрлес енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсем	31.09.99"

позиции

1	2	3	4
"7.	Сĕтел-пукан тăвасси	Çынсем уйрăм заказ панипе кухня сĕтел-пуканĕ тăвасси	31.02.2
		Ытти ушкăнсене кĕртмен ытти сĕтел-пукан тата сĕтел-пуканăн уйрăм деталĕсене çынсем уйрăм заказ панипе тăвасси	31.09.2"

позиципе улăштарас;

тăххăрмĕш абзацра "Раççей Федерацийĕн Финанс министерстви" сăмахсене "федерацин ĕç тăвакан влаçĕн налуксем тата пуçтарусем енĕпе тĕрĕслев тата асăрхав ĕçĕсене пурнăçлама полномочи панă органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

5) 39.1 статьяра:

а) 1-мĕш пунктăн тăваттăмĕш абзацĕнче "Раççей Федерацийĕн Финанс министерстви" сăмахсене "федерацин ĕç тăвакан влаçĕн налуксем тата пуçтарусем енĕпе тĕрĕслев тата асăрхав ĕçĕсене пурнăçлама полномочи панă органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

ă) 1.3-мĕш пунктăн саккăрмĕш абзацĕнче "Раççей Федерацийĕн Финанс министерстви" сăмахсене "федерацин ĕç тăвакан влаçĕн налуксем тата пуçтарусем енĕпе тĕрĕслев тата асăрхав ĕçĕсене пурнăçлама полномочи панă органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

б) 1.4-мĕш пунктăн тăххăрмĕш абзацĕнче "Раççей Федерацийĕн Финанс министерстви" сăмахсене "федерацин ĕç тăвакан влаçĕн налуксем тата пуçтарусем енĕпе тĕрĕслев тата асăрхав ĕçĕсене пурнăçлама полномочи панă органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

6) 39.2 статьян тăххăрмĕш абзацĕнче "Раççей Федерацийĕн Финанс министерстви" сăмахсене "федерацин ĕç тăвакан влаçĕн налуксем тата пуçтарусем енĕпе тĕрĕслев тата асăрхав ĕçĕсене пурнăçлама полномочи панă органĕ" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин "Раççей Федерацийĕн налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" 2015 çулхи çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнчи 27 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 6 №; "Республика" хаçат, 2018, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2020, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; 2022, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ) 2 статйине çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 3-мĕш пунктра "тата 2023 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕччен" сăмахсене кăларса пăрахас;

2) 4-мĕш пунктра "2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа" сăмахсене "2027 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа" сăмахсемпе улăштарас.

3 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин "Раççей Федерацийĕн налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" саккунне тата Чăваш Республикин "Чăваш Республикин "Раççей Федерацийĕн налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен" саккунĕн 2 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен" 2023 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнчи 74 №-лĕ саккунĕн ("Республика" хаçат, 2023, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ) 3 статйин 2-мĕш пайĕнче "2022 тата 2023 çулсем" сăмахсене "2022, 2023 тата 2024 çулсем" сăмахсемпе улăштарас.

4 статья

1. Çак Саккун, çак статьяпа урăх вăхăтра вăя кĕртме палăртнă положенисемсĕр пуçне, 2025 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, анчах та ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа пĕр уйăх иртиччен маларах мар тата тивĕçлĕ налук енĕпе черетлĕ налук тапхăрĕн пĕрремĕш числинчен маларах мар, вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 1-мĕш пункчĕ тата 2 статйин 2-мĕш пункчĕ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕреççĕ.

3. Çак Саккунăн 1 статйин 4-мĕш пункчĕн "б" çум пункчĕн пĕрремĕш тата виççĕмĕш абзацĕсем, 5-мĕш тата 6-мĕш пункчĕсем, 2 статйин 1-мĕш пункчĕ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕреççĕ тата 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă право хутшăнăвĕсене пырса тивеççĕ.

4. Чăваш Республикин "Раççей Федерацийĕн налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" 2001 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 38 №-лĕ саккунĕн (çак Саккунпа улшăнусем кĕртнĕ) 33 статйин çиччĕмĕш тата тăххăрмĕш абзацĕсен положенийĕсемпе транспорт налукне 2024 çулхи налук тапхăрĕшĕн тӳлесе татнă вăхăтран пуçласа усă кураççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕ
50 №